25-мӗш ҫул тухать. Хакӗ 15 пус.

Пӗтӗм тӗнчери пролетарисем, пӗрлешӗр!

1942
июль
2
КӖҪНЕРНИКУН
152(6087) №

Чӑваш Коммуни

ВКП(б) ОБКОМӖПЕ ШУПАШКАР ХУЛА КОМИТЕЧЕН, ЧАССР ВЕРХОВНЫЙ СОВЕЧӖН ТАТА ШУПАШКАР ХУЛА СОВЕЧӖН ХАҪАЧӖ

Вӑтам рабочин ӗҫ тухӑҫлӑхне ҫӗклессишӗн

Сталин юлташӑн Майӑн 1-мӗшӗнчи приказӗнче лартнӑ аслӑ задачӑсене пурнӑҫа кӗртессишӗн пуҫарса янӑ социализмлӑ ӑмӑртӑва пирӗн ҫӗршыври миллионшар ӗҫҫыннисем хутшӑнчӗҫ. Халиччен хӑйсен производствӑллӑ программисене тултарса пырайман хӑшпӗр цехсемпе заводсем ӑмӑртура палӑрмаллах ӳсӗмсем тума пуҫларӗҫ.

Предприяти коллективӗсен, фабрикӑсемпе заводсен руководителӗсен, партипе комсомол тата профсоюз организацийӗсен тӗп задачи хальхи вӑхӑтра социализмлӑ ӑмӑртӑва чӑн-чӑн массӑллӑ движени туса хурасси, ӑмӑртӑва кашни предприятипе цеха кӑна мар, кашни рабочие, кашни ӗҫҫыннине явӑҫтарасси пулса тӑрать.

«Стахановла движени, паллах, рядовой ҫынсен пире нумай ӳсӗм кӳрекен социализмлӑ ӑмӑртӑвӗн вырӑнне пӗчӗклетме тивӗҫлӗ мар; **производствӑри ӑнӑҫӑва вӑтам ҫынсем, рядовой ҫынсем татса параҫҫӗ.** Эсир, юлташсем, апӗ тӳрех калатӑп, рядовой ҫынсем ҫине тимлӗхсӗр пӑхатӑр. Эсир час-часах ҫакна аса илсе пырӑр: вӑтам рабочисен ӗҫ тухӑҫлӑхне пӗр-пӗр 10 процент чухлӗ хӑпартни—вӑл ҫавтери пысӑк ӗҫ пулса тӑрать, ҫакӑншӑн куллен агитацилемелле те ӗнтӗ», тенӗ М. И. Калинин юлташ Мускаври предприятисенчи парти работникӗсен канашлӑвӗнче.

Пирӗн халӗ чылай ҫӗрте ҫапла пулса тухать: завод е фабрика пӗтӗмӗшпе илсен уйӑхри, кварталри программӑна тултарать, ҫакна ӑна тивӗҫлипех сӑвӑнса палӑртаҫҫӗ, стахановецсемпе ударниксене те тивӗҫлипех мухтаҫҫӗ, вӗсем ҫинчен чылай калаҫаҫҫӗ, ҫыраҫҫӗ, анчах вӑтам рабочисем ҫинчен манаҫҫӗ. Пур предприятисенче те ҫавӑн пекех пирӗн халӗ вӑтам рабочисен йышӗ стахановецсен йышӗнчен пысӑкрах. Ҫавӑнпа та ӗҫӗн ӑнӑҫлӑхне татса паракан вӑтам рабочисен ӗҫ тухӑҫлӑхне хӑпартассишӗн ытларах тӑрӑшнӑ пулсан, предприяти татах та пысӑкрах ҫитӗнӳ тума, ҫӗршывпа фронт валли татах та нумайрах продукци кӑларма пултарнӑ пулӗччӗ. Апла пулсан, пирӗн стахановецсемпе ӗҫленипе пӗрлех, кашни уйрӑм рабочипе ӗҫлемелле: предприятире пӗр ҫын юлмиччен кашни рабочи ӗҫ нормине тултарса пытӑр, ирттерсе тултартӑр, кашни рабочи ӑмӑртӑва хутшӑнтӑр. Цех, предприяти плана тултарнине кӑтартакан вӑтам цифра хыҫӗнче нормӑна тултарманнисем витӗнсе юлма ан пултарччӑр.

Фабрикӑсемпе заводсенче вӑтам ӗҫлекен рабочисен йышӗ пысӑкрах пулнӑ пирки предприяти руководителӗсемпе вӗсенчи организацисен ӗҫӗ те пысӑкланать, йывӑрланать; вӗсен кашни уйрӑм рабочи патне, кашни уйрӑм станок патне ҫывӑхарах пыма, тинкеререх пӑхма лекет.

Кашни рабочи нормӑна тултарса пымалла тӑвассишӗн Ҫӗмӗрле комбинатӗнче юлашки вӑхӑтра хӑшпӗр утӑмсем турӗҫ. Комбинат май уйӑхӗнчи программӑна иртерсе тултарчӗ, июнь уйӑхӗнче те илнӗ обязательствӑсене кӑтартуллӑн пурнӑҫа кӗртрӗ. Новохатный юлташ начальник пулса тӑракан цехра мастерсем, квалификациллӗ рабочисем нормӑна тултарайманнисене шефа илнӗ, вӗсене техникӑна лайӑхрах алла илме вӗрентсе пыраҫҫӗ. Кунта кашни рабочин кулленхи ӗҫне тӗплӗн шута илсе пыни нумай пулӑшать. Ҫавӑн пекех Назаров юлташ начальник пулса тӑракан цехра та халиччен вӑтам ӗҫлесе пынӑ рабочисем, вӗсем ҫине ытларах ҫавӑрӑнса пӑхнӑ пирки, стахановецсен ретне хутшӑнчӗҫ. Ку цехра халӗ ӗнтӗ рабочисенчен ҫурри ытла стахановецсем. Рабочи ҫине тимлӗн пӑхсан, ӑна ӗҫре вӗрентсе, пулӑшса пырсан, кашни рабочи стахановец пулма пултарать. Ҫапла халӗ двухсотниксем уйрӑм рабочисем кӑна мар, бригадӑсем те пулса тӑраҫҫӗ. Ҫӗмӗрле комбинатӗнчи Иванов юлташ начальник пулса тӑракан цехри Болонина бригади хӑйӗн заданине май уйӑхӗнче 228 процент тултарнӑ, июнь уйӑхӗнче вӑл 250 процент ытла тултарнӑ.

Канашри вагонсем юсакан заводри стахановец-двухсотниксем ҫинчен, трехсотниксем ҫинчен республикӑри пичетре нумай ҫыраҫҫӗ, канашлусенче те нумай калаҫаҫҫӗ. Тӗрӗс, стахановецсене палӑртмалла. Анчах заводра нормӑна тултарса пыман рабочисем те чылай-ха. Вӗсем хушшинче завод руководителӗсемпе унти организацисем ҫителӗксӗр ӗҫлеҫҫӗ. Вӑтам рабочин ӗҫ тухӑҫлӑхне ҫӗклессишӗн ҫине тӑрса, тимлӗн ӗҫлесен, завод нумай ытларах продукци кӑларса пынӑ пулӗччӗ.

Стахановецсемсӗр предприяти халӗ ҫук. Анчах хӑшпӗр предприятисем, вӗсенче стахановецсем пур пулсан та, производство программине пурнӑҫа кӗртсе пыраймаҫҫӗ. Шупашкарти Водопьянов ячӗпе тӑракан тир-сӑран заводӗнче Терентьева, Шайбина, Фадеева, Токарева тата ытти юлташсем, ӗҫе тинрех кӑна тытӑннӑ пулсан та, нормӑна 150 — 200 процент тултарса пыраҫҫӗ. Анчах завод, пӗтӗмӗшпе илсен, программӑна пурнӑҫа кӗртсе пыраймасть. Ҫавӑн пекех Ленин ячӗпе тӑракан фабрикӑра та, «Красный кустарь» артельре те. Ку предприятисенче вӑтам рабочи ҫине ку таранччен тивӗҫлипе ҫавӑрӑнса пӑхман.

Предприятисенчи партипе комсомол тата профсоюз организацийӗсен хӑйсен массӑллӑ политикӑллӑ ӗҫне мӗнпур рабочисен ӗҫ тухӑҫлӑхне хӑпартас ӗмӗтпе урӑхлатса ҫӗнетмелле, кашни рабочин кулленхи ӗҫне шута илсе пымалла; заводӑн пӗтӗмӗшлӗ сводки витӗр кашни уйрӑм рабочин ӗҫ тухӑҫлӑхӗпе пахалӑхӗ, унӑн чӑн-чӑн патриотла сӑн-сӑпачӗ курӑнса тӑтӑр. Кирлӗ ҫӗрте рабочие пулӑшмалла, хавхалантармалла. Пирӗн час-часах ҫапла пулать: обязательствӑсем йышӑнаҫҫӗ, кам мӗнле ӗҫленине ҫырса пыма кӑтарту хӑмисем тӑваҫҫӗ, стена хаҫачӗсемпе боевой листоксем кӑлараҫҫӗ, производствӑллӑ канашлусем туса ирттереҫҫӗ, анчах кӑшт вӑхӑт иртсенех лӑпланаҫҫӗ. Хӗрӳллӗн тытӑнаҫҫӗ, часах сӳрӗлеҫҫӗ. Вара кӑтарту хӑми ҫине ҫырса хунӑ цифрӑсем 5 кун, 10 кун тӑраҫҫӗ та шупкалса каяҫҫӗ. Вӑтам рабочипе ӗҫлесси вӑл — куллен, пӗр сӳрӗлмесӗр туса пымалли ӗҫ. Ҫак ӗҫе тавра туса пыракан массӑллӑ-политикӑллӑ ӗҫе шавшӑн мар, производствӑна усӑ кӳрессишӗн, фронтпа ҫӗршыв валли ытларах продукци туса кӑларассишӗн вӑйлатмалла.

Производствӑри кашни рабочин ӗҫ тухӑҫлӑхне тивӗҫлипех хӑпартсан, вӑтам рабочисен йышӗ хӑйӗн программине тӑтӑшах тултарса пырсан, иртерсе тултарсан, кашни рабочи социализмлӑ ӑмӑртӑва чӑннипех хутшӑнсан, пирӗн предприятисем татах та нумайрах продукци пама тытӑнӗҫ, эпир хамӑр умма ҫулпуҫ лартнӑ аслӑ задачӑсене чыслӑн пурнӑҫа кӗртӗпӗр.

СССР ОРДЕНӖСЕМПЕ МЕДАЛӖСЕМ ПАНИ

СССР Верховный Совет Президиумӗн Председателӗ М. И. Калинин юлташ награда панӑ ҫынсене июнӗн 30-мӗшӗнче орденсемпе медальсем панӑ.

Орденсемпе медальсем панӑ хыҫҫӑн М. И. Калинин юлташ награда илнӗ ҫынсене ҫакӑн пек кӗске сӑмах каланӑ.

— Хальхи вӑрҫӑ, — тенӗ Калинин юлташ, — войскӑсен чылай пысӑк чаҫӗсене ертсе пыракан командирсене питех те ҫирӗп, паттӑр пулма, вӑрҫӑ ӗҫне тӗплӗн пӗлсе тӑма тата, юлашкинчен, нумай япалана пӗлме хушать. Чӑнах та, хальхи войскӑсен хӗҫпӑшалӗсем питех те сложнӑй япаласем тата вӗсем ытла та тӗрлӗ. Ҫавӑнпа та ҫапӑҫура пур йышши хӗҫпӑшалсене те пӗрле ҫыхӑнтарса-килӗштерсе ӗҫлеттерме пӗлмешкӗн, специальнӑй войскӑсен командирӗсем ҫинчен калас пулсан — ҫав хӗҫпӑшалсемпе лайӑхрах усӑ курмашкӑн войско начальникӗн япалах тата нумай вӗренес пулать.

— Сталин юлташӑн приказӗ, 1942 ҫулла нимӗҫсен фашистла войскисене тӗппипех аркатса тӑкмалли тата совет ҫӗршывне гитлерла ирсӗрсенчен ирӗке кӑлармалли ҫулталӑк туса хума пӗтӗм Хӗрлӗ Ҫар умне задача лартакан приказӗ войско командирӗсене тӳрех ҫакӑн пек задачӑна пурнӑҫлама хушать: тӗрлӗ йышши войскӑсен пӗр-пӗринпе ҫыхӑнса пӗр-пӗрне пулӑшса тӑрас ӗҫне питӗ тӗплӗн вӗренсе ҫитмелле, войскӑсене ертсе пырас ӗҫӗн мастерӗсем пулса тӑмалла.

Сталин юлташӑн ҫак кӑтартӑвӗ ҫине пирӗн командирсемпе политработниксен уйрӑмах тимлӗн ҫавӑрӑнса пӑхмалла.

— Ҫапла ӗнтӗ, Оборона Халӑх Комиссарӗн приказне пурнӑҫа кӗртме, тӑшмана хирӗҫ хамӑрӑн чи лайӑх йышши техникӑпа туллин усӑ курма, Сталин юлташ хушнӑ пек ҫапӑҫма вӗренме хамӑрӑн пӗтӗм вӑя хурар!

Награда илнӗ ҫынсем М. И. Калинин юлташ ҫавӑн пек чӗнсе каланине тӑвӑллӑн, нумайччен алӑ ҫупса хапӑл тӑваҫҫӗ. (ТАСС).

Ҫул ҫинче тӑрӑшса ӗҫлеҫҫӗ

ҪӖМӖРЛЕ. («Чӑваш Коммуни» корр.). Пояндайкинӑри «Новая жизнь» колхозӑн кӑҫал ҫул ҫинче задани тӑрӑх 800 кубометр ҫӗр чавмалла. Колхоз правленийӗ ҫак ӗҫе тума ятарласах бригада организацилерӗ.

Бригада членӗсем хӑйсене панӑ ӗҫе тивӗҫлӗн туса пыраҫҫӗ, ҫак кунсенче вӗсем ҫӗр чавмалли плана ытлашшипех тултарчӗҫ. Ӑмӑртӑва сарса пынӑ май ку участокри ӗҫре те пример кӑтаракансем пулчӗҫ. Акӑ Мария Яригина, Дария Сафонова тата Елизавета Иванова пӗр кун та ӗҫрен юлмарӗҫ, нормӑсене кашниех 120—150-шар процент тултарса пычӗҫ.

Ҫул ҫинче ӗҫлекенсем хушшинче политикӑллӑ-массӑллӑ ӗҫе те куллен туса пыраҫҫӗ. Каннӑ е апатланнӑ хушӑра вӗсем хаҫат-журналсем вулаҫҫӗ, кунтах вулав ҫурчӗн заведующийӗ Надя Усова уйрӑм темӑсем тӑрӑх калаҫусем ирттерет, хаҫатсем вуласа парать.

Совет Информаци Бюровӗнчен

Июнӗн 30-мӗшӗнчи каҫхи пӗлтерӳ

Июнӗн 30-мӗшӗнче **Курск** енче пирӗн войскӑсем противникӑн йышлӑ пехотипе танкӗсен атакисене сире-сире янӑ. Противник ҫавтери пысӑк ҫухатусем тӳсет. Пирӗн войскӑсем нимӗҫсен 150 танкне ҫити ҫӗмӗрнӗ.

Фронтӑн **Севастополь** участокӗнче пирӗн войскӑсем противникӑн йышлӑ вӑйӗсен хаяр атакисене сире-сире пӑрахнӑ.

Фронтӑн ытти участокӗсенче паллӑ улшӑнусемех пулман.

* * *

Июнӗн 29-мӗшӗнче пирӗн авиацин чаҫӗсем фронтӑн тӗрлӗ участокӗсенче нимӗҫсен 23 танкне, войскӑсемпе груз сем турттарса пыракан 50 автомашинине ытла пӗтерсе тӑкнӑ е сиенленӗ, артиллерин 4 батарейине тата зенитнӑй пулеметсен 27 точкине пусарса лартнӑ, боеприпассен 2 складне сирпӗнтерсе янӑ, противникӑн пехотине пӗр батальона ҫити сапаласа янӑ, вӗсенчен пӗр пайне пӗтерсе тӑкнӑ.

* * *

Курск енче вӑйлӑ ҫапӑҫусем пыраҫҫӗ. Фронтӑн пӗр участокӗнче кӑна пирӗн Пухов юлташ командир пулса ертсе пыракан чаҫсем пӗр кун хушшинче нимӗҫ салтакӗсемпе офицерӗсене 2.000 ҫынна ытла, 22 танк тата 5 самолет пӗтерсе тӑкнӑ, ҫав самолетсенчен 2 бомбардировщикне пӑшалсемпе пулеметсенчен ушкӑнпа персе ӳкернӗ.

* * *

Севастополе хӳтӗлекенсем тӑшмана хирӗҫ пыракан кӗрешӳре халиччен курман хастарлӑхпа ҫирӗплӗх кӑтартаҫҫӗ. Старшинан Сучков юлташӑн автоматчикӗсен ушкӑнӗ виҫӗ кун хушшинче 12 атакӑна сирсе янӑ, противникӑн пехотине 3 ротӑна ҫити стройран кӑларнӑ. Пысӑк ҫухатусем тӳссе, нимӗҫсем старши лейтенант Гарафонов подразделенийӗн окопӗсене ҫӗмӗрсе кӗме пултарнӑ. Пирӗн боецсем штыксемпе хирӗҫ атака тунӑ та нимӗҫсене каялла сирсе янӑ. Гитлеровецсем ҫав тытӑҫура, вилнисене кӑна шутласан та, 150 ҫын ҫухатнӑ. Противник пӗр блиндажа, пирӗн 7 боец Акобия старшинапа пӗрле хӳтӗлекенскере, тытса илме темиҫе хут та хӑтланса пӑхнӑ. Паттӑр боецсем пур атакӑсене те сирсе янӑ. Акобия юлташ ручной пулеметран персе 150 нимӗҫе ҫити пӗтерсе тӑкнӑ. Старши лейтенант Шаповаловӑн батарейинчи зенитчиксем темиҫе кун хушшинчи ҫапӑҫусенче нимӗҫсен 29 самолетне персе ӳкернӗ, 5 самолетне сиенленӗ.

* * *

Хӗвеланӑҫ фрончӗн уйрӑм участокӗсенче пирӗн артиллери противникӑн 3 блиндажне пехотипе пӗрле ҫӗмӗрсе тӑкнӑ, 2 наблюдательнӑй пункта тата пӗр дзота ҫӗмӗрнӗ, миометсен 2 батарейине пусарса лартнӑ, противникӑн пехотине пӗр батальона ҫити сапаласа янӑ, вӗсенчен пӗр пайне пӗтерсе тӑкнӑ.

* * *

Украинӑри партизансен отрячӗ противник танкӗсен колонни ҫине ӑнӑҫлӑн пырса тапӑннӑ. Ҫул патӗнче засада туса, партизансем нимӗҫсен танкӗсем ҫине гранатӑсем тата ҫунакан шӗвек тултарнӑ бутылкӑсем нумай ыватнӑ. Нимӗҫсен 7 танкӗ пӗрин хыҫҫӑн тепри ҫунса кайнӑ. Партизансем противникӑн 30 танкистне ытла пӗтерсе тӑкнӑ.

* * *

Фронтӑн Севастополь участокӗнче нимӗҫсен 170-мӗш пехотнӑй дивизийӗнчи 401-мӗш полкран тыткӑна лекнӗ ефрейтор М. Бибенгорст ҫапла каласа панӑ: «Пирӗн полк наступлени тума тытӑннӑ малтанхи кунах пысӑк ҫухатусем тӳсрӗ. Хӑшпӗр ротӑсене пӗтӗмпех пӗтерсе тӑкнӑ, ыттисенче 10—20-шер ҫын ҫеҫ тӑрса юлнӑ. Питӗ нумай офицера стройран кӑларнӑ».

* * *

Франци халӑхне сутакансем Германи промышленноҫӗ валли рабочисем пухса пама хӑтланаҫҫӗ. Анчах та Франци патриочӗсем вербовка пункчӗсене бойкот тӑваҫҫӗ тата вӗсен ӗҫӗсене пӗтере-пӗтере лартаҫҫӗ. Францире гитлерла Германи валли рабочисем пухса тӑратасси намӑслӑн арканса кайнӑ. Ҫавна май гитлерла тарҫӑсем рабочисене хӑратма тата тӗрлӗ провокацисем тума тытӑннӑ. Леймсра нумай рабочисене, Германие кайма килӗшменнисене, усаллӑн саботаж тунӑ тесе айӑпла пуҫланӑ. Полицире рабочисене ҫапла каланӑ: эсир кутӑнланса тӑрса 5 кун хушшинче Германие тухса каймасассӑн, сире хытӑ айӑплатпӑр, тенӗ.

Июлӗн 1-мӗшӗнчи ирхи пӗлтерӳ

Июлӗн 1-мӗш ыран тенӗ чух ҫӗрле Курск тата Севастополь енӗсенче пирӗн войскӑсем противника хирӗҫ ҫапӑҫнӑ.

Фронтӑн ытти участокӗсенче паллӑ улшӑнусемех пулман.

* * *

Курск енче вӑйлӑ ҫапӑҫусем пулса пыраҫҫӗ, ҫав ҫапӑҫусенче пирӗн войскӑсем противника питех те пысӑк ҫухатусем кӳреҫҫӗ. Аникушкин юлташ командир пулса ертсе пыракан танкистсем, гитлеровецсен танкӗсен колонни ҫине хӑвӑрттӑн пырса тапӑнса, нимӗҫсен 9 танкне пӗтерсе тӑкнӑ. Тепӗр участокра противникӑн танкӗсем пӗр юханшыв урлӑ каҫма хӑтланнӑ, анчах вӗсем ҫине Савченко юлташ командир пулса тӑракан чаҫри боецсем пеме тытӑннӑ. Хӑйсен 12 танкне ҫӗрмӗсен, гитлеровецсен каялла чакмалла пулнӑ.

* * *

Севастополе хӳтӗлекен артиллерист-минометчиксем нимӗҫсемпе румынсен войскисен техникипе чӗрӗ вӑйне питӗ тӗл пereҫҫӗ. Моргунов юлташ командир пулса ертсе пыракан артиллеристсем 5 кун хушшинче нимӗҫсен 7 танкне ҫӗмӗрнӗ, минометсен пӗр батарейине, 4 орудие тата противникӑн пехотине 2 полка ҫити пӗтерсе тӑкнӑ. Рыбаков командирӑн минометчикӗсем темиҫе кун хушшинче нимӗҫсен пехотине 4 батальона ҫити, 5 автомашинӑна, 3 наблюдательнӑй пункта пӗтерсе тӑкнӑ тата нимӗҫсен 15 танкне ҫӗмӗрнӗ. Лейтенант Юрасов командир пулса ертсе пыракан артиллеристсене противник ҫавӑрса илнӗ пулнӑ. Артиллеристсем 3 сехет хушшинче нимӗҫсен атакисене сире-сире пынӑ, 200 гитлеровеца ҫити пӗтерсе тӑкнӑ. Тӗттӗм пулсан тепӗр подразделенири боецсем ҫав артиллеристсене пулӑшма ҫӗмӗрсе шӑтарса кӗрсе кайнӑ та вӗсене ҫавӑрса илнӗ ункӑ ӑшӗнчен пӗтӗм материальнӑй чаҫӗпе пӗрле ирӗке кӑларнӑ, Мезецкийпе Кочергинӑн орудийӗсем тӑшманӑн пехотине пӗр батальона ҫити пӗтерсе тӑкнӑ, 2 танка ҫӗмӗрнӗ тата боеприпассем тиенӗ 5 автомашинӑна сирпӗнтерсе янӑ.

* * *

Н-ски чаҫри снайперсем (Калинин фрончӗ) пӗр уйӑх ҫурӑ хушшинче 360 гитлеровеца пӗтерсе тӑкнӑ. Снайпер Макаров юлташ 26 нимӗҫе, Прядеин юлташ —28 нимӗҫе, Вишняков лейтенант — 34 нимӗҫе, Ломбин юлташ — 23 гитлеровеца пӗтерсе тӑкнӗ

* * *

Белоруссири партизансем нимӗҫсен фашистла захватчикӗсене ӑнӑҫлӑн пӗтерсе пыраҫҫӗ. Р. юлташ командир пулса ертсе пыракан отряд 12 кун хушшинчи ҫапӑҫусенче 450 оккупанта пӗтерсе тӑкнӑ. Л. юлташ командир пулса ертсе пыракан партизансем штабӗсене купаласа хунӑ торфа вут тӗртсе ҫунтарнӑ. Вутра 50.000 тонна торф тата 3 автомашина ҫунса кайнӑ. М. юлташ командир пулса тӑракан отряд 6 кун хушшинче нимӗҫсен 50 салтакӗпе офицерне пӗтерсе тӑкнӑ, противникӑн войскисене турттарса пыракан 2 поезда крушени тунӑ. Д. юлташӑн отрядӗнчи партизансем 10 кун хушшинче 214 гитлеровеца пӗтерсе тӑкнӑ тата чугунҫула темиҫе тӗлте сирпӗнтерсе янӑ.

* * *

Севастополь патӗнче нимӗҫсен 72-мӗш пехотнӑй дивизийӗнчи 266-мӗш полкӑн 10-мӗш ротинчен тыткӑна лекнӗ ефрейтор Вильгельм Клейн ҫапла каласа панӑ: «Пире ҫапла калатчӗҫ: командовани пур пӗчӗк ӗҫсем таранах малтанах шутласа хунӑ, Севастополе ик-виҫӗ кун хушшинче илетпӗр тетчӗҫ. Халӗ ӗнтӗ эпир пире вилӗм аллине панине ӑнланса илтӗмӗр. Полк питех те пысӑк ҫухатусем тӳсрӗ. Ку наступлени халех те ӗнтӗ питӗ хакла ларчӗ, анчах малашне мӗн пуласси пӗрех те паллӑ мар».

* * *

Нимӗҫсен 385-мӗш дивизийӗнчи 537-мӗш полкран тыткӑна лекнӗ салтак К. Иозеф ҫапла каласа панӑ: «Эпӗ Эссен хулинче Крупп заводӗнче ӗҫленӗ. Рабочисем 1941 ҫултах ҫурма выҫӑ пурӑннӑ, халӗ ӗнтӗ нумайӗшӗ чӑннипех выҫӑ пурӑнаҫҫӗ. Арӑмпа йысна мана продуктсем памалли нормӑна кашни уйӑхрах чакарса пыраҫҫӗ тесе ҫырнӑччӗ. Пирӗн дивизие ҫар предприятийӗсенчи рабочисенчен пухса тунӑ. Февральпе март уйӑхӗсенче эпир Ганновертан инҫех мар вырӑнта ҫар ӗҫне вӗрентӗмӗр. Пире васкаса вӗрентрӗҫ. Фронта тухса кайнӑ чухне нумайӑшӗ гранатӑна тата пулемета тыткалама пӗлмесчӗҫ. Дивизири офицерсен 80 процентӗ запасран илнӗскерсем. Ҫар тӗлӗшпе вӗсем те питӗ сахал хатӗрленнӗ. Салтаксем хушшинче вӑрҫа хирӗҫ шухӑшкӑмӑлсем вӑйлӑн сарӑлнӑ. Манӑн ротӑри 5 салтак тата 4 ефрейтор (вӗсен хушамачӗсене, паллах ӗнтӗ, пӗлтерме кирлӗ мар) мана Германия ҫак вӑрҫӑра аяла пулатех, вӑл хӑйӗн пӗтес кунҫулӗ патне майӗпен, анчах та тӳрех утса пырать, тесе ӗнентерсе калатчӗҫ».

* * *

Нимӗҫ ирсӗрӗсем ҫӗнӗрен ҫавтери хӑрушӑ ӗҫсем туни ҫинчен хыпар килнӗ. Гитлеровецсем Макарьевӑри инвалидсен ҫуртне (Ленинград облаҫӗ) ҫаратса пӗтернӗ, хӑйсене хӳтӗлеме пултарайман хӗрарӑмсенчен мӗнпур апатҫимӗҫе туртса илнӗ, ҫапла туса ҫав хӗрарӑмсене выҫӑ вилӗмпе вилмелле туса хунӑ. Кӗске вӑхӑтрах выҫӑпа 60 ҫын вилнӗ. Унтан гестаповецсем чӗрӗ юлнӑ 244 хӗрарӑма хире хӑваласа кӑларнӑ та вӗсене пулеметсенчен пере-пере вӗлернӗ.

Совет Союз Геройӗн званине панӑ Мильдзихов юлташӑн геройла ӗҫӗсем ҫинчен пӗлтерекен хыпар унӑн тӑван Эльхотово ялӗнче (Ҫурҫӗр Осетия) пӗр самантра сарӑлса ҫитнӗ. Мильдзихов юлташӑн амӑшӗ патне ӑна ырӑ сунма пӗтӗм килхушши тулли хӑнасем пуханнӑ. Ҫавӑнтах митинг пуҫланса кайнӑ. **Укерчӗк ҫинче:** Совет Союз Геройӗн Казбек Карсановӑн амӑшӗ (сылтӑмри) Совет Союз Геройӗн Хазимурза Мильдзиховӑн амӑшне саламлать.

А. САПИРА фотоӳкерчӗкӗ (ТАСС фотохроники).

РЕСПУБЛИКӐН УЙХИРӖСЕНЧЕ

Вӑрмар МТС-ӗ ирхи ҫӗртме планне тултарчӗ

Пысӑк тухӑҫлӑ тырпул туса илессишӗн Пӗтӗм Союзри социализмлӑ ӑмӑртӑва хутшӑнса, Вӑрмар МТС-ӗн тракторисчӗсемпе трактористкисем ирхи ҫӗртме сухинче татах та пысӑкрах ҫӗклентӳпе ӗҫлеҫҫӗ. Июнӗн 1-мӗш тӗлне вӗсем пурӗ 4.860 гектар сухаласа, МТС-ӑн ирхи ҫӗртме тумалли планне ҫӗр процентпех пурнӑҫларӗҫ. Трактористкӑсен пӗррӗмӗшпе иккӗмӗш бригадисем тата комсомолецсемпе ҫамрӑксен трактор бригади уйрӑмах паха тӗслӗхсем кӑтартаҫҫӗ. Июнӗн 1-мӗш тӗлне трактористкӑсен иккӗмӗш бригади ирхи ҫӗртме планне 146 процент, пӗррӗмӗш бригади 129 процент тултарчӗҫ. Ҫавӑн пекех комсомолецсемпе ҫамрӑксен 13-мӗш номерлӗ трактор бригади те ирхи ҫӗртме планне 106 процент тултарчӗ.

Нумай трактористсем хӑйсем ҫине илнӗ социализмлӑ обязательствӑсене чыслӑн пурнӑҫласа пыраҫҫӗ. Иккӗмӗш бригадӑри трактористкӑсем Онуфриева тата Русакова юлташсем социализмлӑ ӑмӑртӑва хутшӑнса хӑйсен тракторӗсемпе 450-шар гектар сухалама обязательство илнӗччӗ. Паянхи куна вӗсем, 600-шер гектар сухаласа, хӑйсен обязательствине иртерсе пурнӑҫларӗҫ. Ҫавӑн пекех Анна Чеснокова, Екатерина Чернова трактористкӑсем те хӑйсем ҫине илнӗ обязательствӑсене чыслӑн пурнӑҫларӗҫ.

С. ВОРОБЬЕВ.
МТС политотделӗн начальник заместителӗ.

Ҫум ҫумласа пӗтернӗ

ХӖРЛӖ ЧУТАЙ. Тарабайри «Агроном» колхоз ҫуртрисене, техникӑллӑ культурӑсене ҫумкурӑксенчен пӗрер хут тасатса тухнӑ. Тырӑсене ҫумкурӑкӗсенчен малашне те ҫийӗнчех тасатса тӑма колхоз хатӗр тӑрать.

С. МАКАРОВ.

Утӑ ҫулма хатӗрленеҫҫӗ

ЭЛӖК. Тугачри ВКП(б)-н XIII-мӗш съезчӗн ячӗпе тӑракан колхоз ҫӗртме сухи туса пӗтерчӗ, утӑ ҫулма хатӗрленме тытӑнчӗ. 72 ҫулхи колхозник Артеми Самуилов колхозниксемпе колхозницӑсем валли 31 кӗрепле турӗ. Колхозниксем ҫавасене туптаса хатӗрленӗ, урапасемпе ут хатӗрӗсене юсаса ҫитереҫҫӗ.

Хорнварти «Пӗрлешӳ» колхоз та ҫак кунсенче ҫӗртме сухине туса пӗтерчӗ. Халӗ колхозниксем утӑ ҫулма тимлӗн хатӗрленеҫҫӗ.

М. КУСТИКОВ.

Обязательствӑсене пурнӑҫласа пыраҫҫӗ

КАНАШ. Кармалинчи Чапаев ячӗпе тӑракан колхоз членӗсем (председателӗ Е. Тихонов юлташ), Пӗтӗм Союзри социализмлӑ ӑмӑртӑва активлӑн хутшӑнса, хӑйсем ҫине илнӗ обязательствӑсене тимлӗн пурнӑҫласа пыраҫҫӗ. Июнӗн 26-мӗш тӗлне колхозниксем 222 гектар ҫинчи тырӑсене ҫумкурӑксенчен тасатса тухрӗҫ, ҫӗртме пусси ҫине 3404 лав тислӗк кӑларчӗҫ. Уборкӑна хатӗрленес ӗҫ те лайӑх пырать. Жнейкӑсемпе косилкӑсене юсаса лартнӑ, колхозниксем ӗҫе тухма ҫурласем, ҫавасем хатӗрлеҫҫӗ. Колхоз производствинче вӗренекен хӗрачасем Анна Анисимова, Вера Елисеева, Е. Соловьева, Е. Миронова пӗр кун юлмасӑр ӗҫлеҫҫӗ. Алексей Павлов, В. Петров, К. Николаев вӗренекенсем кунне 8 ҫухрӑмри уя 20-шер лав тислӗк турттараҫҫӗ.

Ф. МАЛЫШКИН.

Колхозсем силос хываҫҫӗ

ИШЛЕЙ. Районри колхозсем силос хывма тытӑнчӗҫ. Мамӑш ялсоветӗнчи Буденный ячӗпе тӑракан колхоз 12 тонна, «Коммунист» колхоз 15 тонна хывса хӑварнӑ.

Шурча ялсоветӗнче «Танк» колхоз 20 тонна, «Самолет» — 15 тонна, Чурачӑк ялсоветӗнчи Карл Маркс ячӗпе тӑракан колхоз 15 тонна силос хывнӑ.

Силос хывас тӗлӗшпе «Самолет» колхозра ятарласа бригада организациленӗ.

Силос хывас тӗлӗшпе июнӗн 25-мӗшӗнче комсомолецсемпе ҫамрӑксен ҫирӗмкунлӑхӗ пуҫланчӗ. Вӑл вӑхӑтра колхозсем силос хывас плана 70 процентран кая мар тултарасшӑн.

З. МИТРОФАНОВА.

Тырпулсене пухса кӗртме хатӗрленеҫҫӗ

ВӐРНАР. Пӑваялӗнчи «Большевик» колхозӑн членӗсем вӑйлӑ тырпул туса илессишӗн кӗрешеҫҫӗ. 100 гектар ҫинчен ҫумкурӑкӗсене тасатнӑ. Махорка лартса пӗтернӗ. Ҫавасене туптаса, ҫурласене шӑллаттарса хунӑ, 150 кӗрепле туса хатӗрленӗ. Утӑ ҫулмалли тата тырӑ вырмалли машинӑсене юсанӑ.

Колхозра бригадӑпа бригада, колхозникпе колхозник ӑмӑртса ӗҫлесе пыраҫҫӗ. 3-мӗш бригада кӗрхи ака тума хатӗрленсе ҫитнӗ. Машинӑсене, сеялкӑсене, плугсене пурне те юсаса ҫу ҫӗрсе лартнӑ. Ытти бригадӑсем те, 3-мӗш бригадӑран пример илсе, уборкӑна тата кӗрхи акана тума тимлӗн хатӗрленеҫҫӗ.

И. КОРАКОВ.

Колхоза кӗреҫҫӗ

ХӖРЛӖ ЧУТАЙ. Ҫак кунсенче Тарабайри единоличниксен 4 хуҫалӑхӗ 12 едокпа «Агроном» колхоза кӗчӗҫ. Колхоза кӗнӗ ҫӗнӗ ҫынсем колхоз производствинче активлӑн ӗҫлеме тытӑнчӗҫ.

С. МАКАРОВ.

ПАРТИ ПУРНĂÇĔ

Коммунистсем социализмлă ăмăртура малта пыраççĕ

КАНАШ. Вагонсем юсакан заводра социализмлă ăмăртура анлăн сарăлчĕ. Ăмăртура май уйăхĕнче Толарев ертсе пыракан цех малта тухрĕ, 2-мĕш квартал плана та цех июнĕн 22-мĕш тĕлне пурнăçларĕ. Ытти рабочисем пурте çĕ нормисене тултара ĕçлеççĕ. Цехри коммунистсем питех те тăрăшса ĕçлени курăнать. Коммунистсем: Бельский нормăна — 339 процент, Флегентов — 187 процент, Скрыпник — 214 процент, Савченко — 404 процент таран тултарса ĕçлеççĕ. Цех заводăн куçса çÿрекен Хĕрлĕ ялавне çĕнсе илчĕ.

Вагонсем юсакан цехри коммунист Чесов май уйăхĕнче заданине 224 процент пурнăçа кĕртнĕ, июнь уйăхĕнче те вăл çакăн пекех лайăх ĕçленĕ. Унăн бригади çур уйăхри задание вунă кун хушшинчех тултарнă. Тепĕр цехра коммунист Голубован бригади аван ĕçлеме пуçларĕ. Инструментальнăй цехри коммунист-слесарь Кальтман май уйăхĕнче ĕç нормине 332 процент тултарнă, июнь уйăхĕнче те тухăçлăн ĕçлерĕ. Коммунистсем Моряхова Осипов юлташсем те ĕç нормисене питрех тултарса пыраççĕ. Тимĕрç цехĕнчи прессовщик коммунист Третьяк юлташ июнь уйăхĕнче нормăна тăтăшах 200 процент таран тултарса ĕçленĕ. Дубина тата Садовин юлташсем те ĕç тухăçлăхне ÿстерсе пыраççĕ. Вĕсем кура ытти рабочисем те тăрăшса ĕçлеççĕ. Самарцев, Соколовский юлташ начальник, Белоусов юлташ парторганизаци секретарĕ пулса тăракан цех кварталь программине малтанах тултарнă.

Çапла вара, пирĕн заводри коммунистсем производствăра пример кăтартса ĕçлеççĕ, ытти рабочисене ертсе пыраççĕ — çакна вара программăна ăнăçлăн пурнăçа кĕртес ĕçре пысăк вырăн йышăнса тăраççĕ.

ШЛАПАК,
Вагонсем юсакан заводри партбюро секретарĕн заместителĕ.

Комсомолецсен производствăри хастарлăхĕ

Пирĕн комбинат коллективĕ Пĕтĕм Союзри социализмлă ăмăртăва хутшăнса хăй çине татăклă обязательствăсем илнĕ. Илнĕ обязательствăсене пур цехсем те ăнăçлăн пурнăçласа пыраççĕ. Уйрăм рабочисемпе работницăсем, хăйсен пĕтĕм ĕçне фронт интересĕсемшĕн туса пырса, кунран кун çĕнĕ çитĕнÿсем кÿреççĕ.

Производство программине пур енĕпе те ытлашшипех ирттерсе тултарас, ĕç тухăçлăхне хăпартас, продукцин хăйне ларакан хакне йÿнетес тĕлĕшпе пыракан кĕрешÿре комсомолецсем пысăк хастарлăх кăтартаççĕ. Вĕсем хушшинче двухсотниксемпе трехсотниксем, ĕçе отличнăй пахалăхпа туса пыракан мастерсем сахал мар. Ĕçре нормăна тултараймасăр комсомолеца килĕшÿллĕ мар. Çакна кашниех ăсра тытать. Çавăнпа, ĕçе нумаях пулмасть пырса кĕнĕ пулин те, комсомолец хăйне панă задание мĕнле те пулсан пурнăçлама тăрăшать.

Паянхи куна нормăна тултарса пыраймасăр комсомолецсем çук, пурте хăйсене панă заданисене 110 процентран кая мар тултараççĕ. Станюлис юлташ начальник пулса тăракан цехри комсомолец Терехов юлташ, вĕтамран илсен, кашни кунах хăйĕн ĕç нормине 240—300 процент тултарать. Июнь уйăхĕнче вăл пĕр брак тумасăр икĕ çыншăн ĕçлерĕ. Çакăн пек ĕçлеççĕ слесарь Краснощеков, токарь Липатов, Пантелеймонов, Костин юлташсем те. Вĕсем хăшпĕр кунсенче, васкавлă заказсене вăхăтра пурнăçлас тесе, вăхăта пăхмасăр ĕçлеççĕ, хăçан та хăçан çав заказа пурнăçлаççĕ, çавăн чухне тин вĕсем канма тухаççĕ.

Производство программине тултарса пырас тĕлĕшпе комсомолецсемпе çамрăксен фронтовой бригади лайăх тĕслĕхсем кăтартать. Ку бригадăна мастер-комсомолец П. Анисимов юлташ ертсе пырать. Бригада членĕсем, кĕске вăхăт хушшинчех технологи процесне вĕренсе çитнĕ май, халĕ пурте тухăçлăн ĕçлеççĕ. Прокопьев юлташ юлашки вăхăтра 3—3,5 норма тултарса ĕçлет, Киселев, Анисимов юлташсем нормăна 2 хут иртерсе тултараççĕ. Фронтовой бригада заданисене яланах 150 процентран кая мар тултарать.

Пирĕн комсомолецсем ĕç хыççăн çар ĕçне вĕренеççĕ. Занятисем эрнере икĕ хут пулса иртеççĕ. Кашни комсомолец çар ĕçне тĕплĕн вĕренме тăрăшать. Массăллă спорт ĕçне те эпир сарсах пыратпăр. Массăллă кроса пур комсомолецсем те хутшăнчĕç. Юлашки вăхăтра уйрăмах футболла вылясси анлăн сарăлчĕ. Ятарласа икĕ команда организациленĕ, вĕсем кашни канмалли кунах выляççĕ.

А. ШЕРЕМЕТЬЕВ.
Çĕмĕрле комбинатĕнчи ВЛКСМ Комитечĕн секретарĕ.

Вăрçă итогĕсем çинчен доклад итленĕ хыççăн

СЕНТĔРВĂРРИ. Районри колхозсемпе предприятисенче В. М. Молотов юлташăн доклачĕпе вăрçăн çулталăкри итогĕсем çинчен сÿтсе-яврĕç.

Ку тĕлĕшпе ВКП(б) райкомĕ колхозсемпе предприятисене 38 агитатор ячĕ. В. М. Молотов юлташăн докладне сÿтсе-явас тĕлĕшпе нумай пулмасть «Портной» артельре пуху пулса иртрĕ. Пухура рабочисем хăйсен шухăш-кăмăлĕсем çинчен тухса каларĕç.

Вĕсем уйăхри плана кашниех 110-шар процент тултарма пулчĕç. Халĕ уйрăм рабочисем нормăна ытлашшипех тултараççĕ. Çĕвĕç Просвиркина нормăна 172 процент, фронтовой бригадăн бригадирĕ Гордеева юлташ 180 процент тултарса ĕçлеççĕ. Рабочисем, производствăра лайăх ĕçленипе пĕрлех, çитес кунсенчех боецсем валли ăшă тумтир пухас ĕçе пуçăнма йышăннă.

Пухусем колхозсенче те пулса иртеççĕ. «Правда» колхозăн бригадирĕ Терентьева юлташ договорпа паллашнă хыççăн çапла каларĕ:

— Виçĕ хăватлă держава пĕр каварлă пулни нимĕç фашисчĕсене хăвăртрах çапса çĕмĕрме пулăшать, пире ĕçлеме хавхалантарать. Эпир татах лайăхрах ĕçлеме пулатпăр.

Терентьева юлташ хăйĕн сăмахĕсене ĕçпе çирĕплетет. Июнĕн 20-мĕш тĕлне унăн бригади тырпулсене çум курăкĕсенчен тасатса пĕтерчĕ.

«Красная Армия» колхозра, В. М. Молотов юлташăн доклачĕ çинчен сÿтсе-явнă май, колхозниксем хăйсем çине обязательствăсем илчĕç. Вĕсем уборкăна хăвăрт та пысăк пахалăхпа иртерме сăмах пачĕç. Ĕçре кирлĕ инвентарьсене пурне те июлĕн 1-мĕшчен юсаса хатĕрлесе хума пулчĕç. Çавăн пекех колхозниксем обществăллă выльăх-чĕрлĕхе ĕрчетес тĕлĕшпе те татăклă обязательство илнĕ. Çамрăк выльăхсене лайăх пăхса ÿсрасa, кăçал 12 пăру, 66 сысна çури, 15 путек, 30 сурăх, 50 кайăк-кĕшĕк çитĕнтерме тата пыл-хуртне 175 çемьене çитерме сăмах панă.

Халь колхоз хăйĕн обязательствисене пурнăçлас тĕлĕшпе хĕрсех ĕçлет. Нумай пулмасть 25 тонна силос хывса хăварчĕ.

Л. ВИГДОРЧИК,
ВКП(б) райкомĕн агитаципе пропаганда отделĕн заведующийĕ.

Хĕрарăмсем ертсе пырас ĕçсенче

ÇĔМĔРЛЕ. (**«Чăваш Коммуни» корр.**). Отечественнăй аслă вăрçă кунĕсенче районра вуншар хĕрарăма ертсе пырас ĕçсене куçарнă.

Вырăс Улхашри «Лесной огонек» колхоз членĕ Мария Короткова иртнĕ çулта колхозра сĕт-çу фермин заведующийĕ пулса ĕçленĕ. Кăçал колхозниксем ăна колхоз председательне суйланă. Вăл тăрăшнипе районра кайра пыракан колхоз малтисен ретне куçма пултарчĕ, çуракине вăхăтра тата пысăк пахалăхпа иртерчĕ, пахча-çимĕçсене те ăнăçлăн лартса хăварчĕ. Халĕ колхозниксем çум çумлаççĕ, утă çулма хатĕрленеççĕ. Колхоз ĕçне кашни колхозникпа колхозница активлăн хутшăнать, вĕсем хушшинче ĕç дисциплинни çирĕп. Кирек мĕнле ĕçре те М. Короткова юлташ хăй пример кăтартать.

Комсомолка Ногаева ялсовет исполкомĕн секретарĕ пулнă, пĕр икĕ уйăх каялла ăна Хутар сельпо председательне лартнă. Калас пулать, çак ответлă вырăнта Ногаева юлташ начар мар ĕçлет. Вăл ертсе пыракан сельпо районра малта пыракансенчен пĕри. Уйрăмăнах сельпо тимĕр-тăмăр пухас тĕлĕшпе юлашки вăхăтра лайăх ĕçлет, пĕтĕмпе 9 тонна ытла пухнă.

Ертсе пырас ĕçсене куçарнă ытти хĕрарăмсем те хăйсене шанса панă участоксенче начар мар результатсем кăтартаççĕ.

Х. ЛИСИН.

КОЛХОЗНИКСЕН ПУЛĂШĂВĔ

Иртнĕ вырсарникун Канаш, Куславкка, Вăрмар тата Шăхасан районĕсенчи колхозниксем массăллă воскресник туса ирттерчĕç. Воскресникре пурĕ 1.386 колхозник ĕçлерĕ. Вĕсем чугунçул работникĕсене социализмла пулăшу пачĕç. Пĕр кун хушшинче колхозниксем 2.100 погоннăй метр тăршшĕ чугунçул линине тÿрлетнĕ, 400 погоннăй метр çул çине хăйăр сарнă, 4 километр çурă тăршшĕ вырăнта чугунçулăн шпалисене улăштарса çĕнĕрен хунă. Кунсăр пуçне чугунçул станцийĕсем патне 16 тонна тимĕр-тăмăр турттарса пынă, 20 тонна тимĕр-тăмăра вагонсем çине тиенĕ. Вăл кун колхозниксем мĕнпурĕ 4.500 тенкĕлĕх ĕçленĕ. Ку укçана колхозниксем Ленинград чугунçулĕ çинче ĕçлекенсене ярса параççĕ.

Июнĕн 30-мĕш. (Хамăр корр).

Районра выльăх-чĕрлĕх ĕрчетес ĕç çителĕксĕр пулса пырать

Иртнĕ 5 уйăх хушшинче Шăхасан районĕ 1942 çулта выльăх-чĕрлĕх ĕрчетес плана сысна енĕпе çеç 100 процент тултарнă. Мăйракаллă шултăра выльăхсем ĕрчетес плана 75 процент кăна тултарнă, çавăн пекех лаша, сурăх, чăх-чĕп ĕрчетес плана та 60—80 процент кăна пурнăçланă.

Районри малта пыракан колхозсем выльăх-чĕрлĕхсем ĕрчетес тĕлĕшпе лайăх ĕçлеççĕ. Пайкильтри «Активист» колхоз государство планне лашасем енĕпе 114,2 процент, Шмидт ячĕпе тăракан колхоз—133,3 процент, «Борец» колхоз—129,5 процент тултарнă. Мăйракаллă шултăра выльăхсене ĕрчетес енĕпе те ку колхозсем аван тĕслĕхсем кăтартаççĕ. Хысаккасри «Трактор» колхоз сысна ĕрчетес плана 150 процент, Çĕнĕ Пинерти «Пинер» колхоз 110 процент, Высоковка ялсоветĕнчи Чкалов ячĕпе тăракан колхоз 135 процент тултарнă. «Пинер» колхоз сыснасем ĕрчетес плана та 142 процент пурнăçланă.

Анчах та выльăх-чĕрлĕх ĕрчетес планне тултарман колхозсем чылай-ха. Ямашри «Ударник» колхоз мăйракаллă шултăра выльăхсем ĕрчетес плана пурĕ те 39,3 процент çеç тултарнă. Çавăн пекех Энтриялĕнчи «Герой», «Орешино» колхозсем те плана çуррине яхăн çеç тултарнă. Молотов ячĕпе тăракан, «Оборона», «Чуваш. ЦИК» колхозсем ку ĕçре кая юлса пыраççĕ. Вĕсем сыснасем ĕрчетес плана 10—20 процент çеç тултарнă.

Çамрăк выльăх-чĕрлĕхсене пăхса ÿстерес ĕç районра çителĕксĕр пулса пырать. Районра кăçалхи тихасен 12 проценчĕ, пăрусен 7 проценчĕ, путексен 10,5 проценчĕ, сысна çурисен 7,7 проценчĕ вилсе пĕтнĕ. Уйрăмăнах выльăхсене пăхса ÿстернĕ енĕпе Чапаев, Куйбышев, Доронин ячĕсемпе тăракан тата «Свет», «Прожектор» колхозсем япăх ĕçлеççĕ.

Çамрăк выльăхсене контрактацилес ĕç те начар пулса тăрать. Район контрактаци планне çуррине те пурнăçламан. «Акатуй», «Красный Октябрь» колхозсем çамрăк выльăхсене пачах контрактацилемен. Çапла пулсан та хăшпĕр колхозсем çамрăк выльăхсене пасара илсе тухса сутнисем те пулнă, мăйракаллă шултăра выльăхсене 6 пуç, сыснасене 34 пуç, сурăхсене 9 пуç пуса пĕтернĕ. Çак çитменлĕхсене пĕтересси... Выльăх-чĕрлĕх ĕрчетессипе большевикла кĕрешмелле.

Партипе правительство сурăхсенчен сĕт суса илсе брынза тăвас пирки ятарласа постановлени йышăнчĕç. Анчах та районра ку тĕлĕшпе нимĕн те тумаççĕ. Паянхи куна районри колхозсем государствăна сĕт парас обязательствăна 20 процент ытларах çеç пурнăçланă.

С. ШАДИН.

Конюх лайăх ĕçлет

СЕНТĔРВĂРРИ. Пĕчченхиртри «Правда» колхозра тургăм вăйне çулран çул ÿстерсе пыраççĕ. Колхоз конюхĕ Дубов юлташ лашасене пăхнă çĕрте тăрăшса ĕçлет. Вăл 9-мĕш çул ĕнтĕ ку ĕçре ĕçлет. Вăл конюха кĕнĕ çул колхозăн 14 лаша анчах пулнă. Дубов тăхăр çул хушшинче колхоза 54 лаша ÿстерсе пачĕ. Пăхса ÿстернисенчен ĕçе юрăхсăрри пĕрре те пулман. Тăхăр çул хушшинче пĕр тиха та вилмен. Лайăх ĕçленине пула, конюх 1939 çулта Мускаври Ялхуçалăх выставкине кайса килчĕ. Вăл ĕçлеме кĕнĕ çулне 3 тиха ÿстерсе панă пулсан, 1939 çулта 12 тиха ÿстерсе панă. Кăçал 14 тиха ÿстерсе пачĕ. Лашасене те, витесене те таса тытать. Хальхи вăхăтра Дубов юлташ 18 лаша пăхать.

Çамрăк ачасем ĕç кĕнекисем илчĕç

ПЕРВОМАЙСКОЕ. Çак иртнĕ кунсенче «Октябрь» колхозăн правленийĕ колхозри çамрăк ачасене ĕç кĕнекисем пачĕ. Ĕç кĕнекисене чи малтан 14 çулти çамрăк ача Николай Атаманов илчĕ. Унăн ашшĕ фронтра тăван çĕршывăн тăшманĕсене хирĕç çапăçать. Ашшĕ каласа хăварнă сăмахсене яланах асра тытса, çамрăк колхозник Николай Атаманов колхозăн производствинчи пур ĕçре те тăрăшса ĕçлет. Кăçал вăл 108 ĕçкунĕ ĕçлесе тунă та ĕнтĕ.

«Октябрь» колхозри çамрăк ачасем колхоз ĕçне юратса, тимлĕн туса пыраççĕ. 12 çулти Дарья Трошкина иртнĕ çул 143 ĕçкунĕ ĕçлесе илнĕ. Кăçал та вăл тăрăшса ĕçлет, 30 ĕçкунĕ ĕçлесе илнĕ те ĕнтĕ. 13 çулти Робик Кафорин 1941 çулта 200 ĕçкунĕ ĕçлесе илнĕ, кăçал вăл 70 ĕçкунĕ тунă ĕнтĕ. Елена Куприянова колхоз производствинче кăçалхи çуркуннеренпе ĕçлеме пуçланă. Унăн ĕç кĕнеки çинче паян куна 32 ĕçкунĕ çырнă.

Колхоз правленийĕ çамрăк ачасене ĕçре уйрăмах ăшшăн пăхса ертсе пырать. Вĕсене ĕçре вĕрентсе пыма опытлă колхозниксене çирĕплетнĕ. Çамрăк ачасем ялхуçалăхĕнчи пур ĕçсене те ăнăçлăн вĕренсе пыраççĕ. Çĕнĕ ĕç кĕнекисем илни çамрăк ачасен ĕçлес кăстарлăхне татах та ÿстерчĕ.

П. СЕРГЕЕВ.

Самолетсен „Осоавиахим Чувашии“ звенине тума

КАНАШ. Районри ĕçсыннисем самолетсен «Осоавиахим Чувашии» ятлă звенине тума паян куна 47 пин тенкĕ укçа пухса панă. «Осоавиахим Чувашии» самолетсен звенине туни — Хĕрлĕ Çара активлăн пулăшни пулать. Çавăнпа ку ĕçе çамрăксемпе пĕрле колхозниксем те активлăн хутшăнса пыраççĕ.

Катек ялĕнчи комсомолецсемпе çамрăксем самолетсен «Осоавахим Чувашии» ятлă звенине тума 1.685 тенкĕ, Уçырмари çамрăксем 1.400 тенкĕ пухса панă. Райцентрти учрежденисенче ĕçлекен служащисемпе ответлă работниксем самолетсен звенине тума пурте пекех пĕр кунхи ĕçукçине уйăрса панă.

Колхозсенчи агитаторсемпе беседчиксен çак патриотизмлă ĕçе колхозниксем хушшинче малалла та анлăн сарса пымалла.

Ф. МАЛЫШКИН.

СОВЕТ СОЮЗĔ ТĂРĂХ

Совет Союзĕн В. И. Ленин ячĕпе тăракан государственнăй библиотеки 80 çул тултарчĕ

1862 çулти июлĕн 1-мĕшĕнче Мускавра государствăн публичнăй библиотеки уçăлнă. Вăл библиотекăра ун чухне 125 пин кĕнеке шутланнă. 80 çул хушшинче библиотека кĕнекесен фондне 10 миллион том таран ÿстернĕ, çапла вăл тĕнчери чи пысăк библиотекăсенчен пĕри пулса тăнă.

Совет Союзĕн В. И. Ленин ячĕпе тăракан государственнăй библиотеки хăйĕн юбилейĕн кунне пысăк выставка туса палăртать. Вăл выставкăра библиотекăн историне кăтартаççĕ, тата унта чи сайра тĕл пулакан алçырăвĕсемпе тĕнчипе те пĕр-икĕ экземпляр çеç сыхланса юлнă кĕнекесем пулаççĕ. Выставкăн пĕр пайĕнче библиотекăн отечественнăй вăрçă кунĕсенчи ĕçĕсене кăтартаççĕ. (ТАСС).

Туркмени ĕççыннийĕсен парни

Туркмени республикин ĕççыннийĕсем Хĕрлĕ Çар валли тата нимĕç оккупанчĕсенчен асап курнă Волоколамск халăхĕ валли пухнă парнесен эшелонĕ Мускава çитнĕ.

Тăван çĕршыва хÿтĕлекенсем валли, Хĕвеланăç фронтĕнче тата Ленинград патĕнче çапăçаканнисем валли, 30 вагон продовольстви уйăрса параççĕ, çав шутра çу, типĕтнĕ кавăнсем, Туркмени хăярсем, типĕтнĕ кавăнсем, Туркменире ÿсекен чи лайăх йышши çырласем пур. Вагонсенчен пĕринче ахал-текински йышши ăратлă икĕ лаша тăраççĕ, вĕсене чи лайăх командирсене-конногвардеецсене параççĕ. (ТАСС).

АНГЛИН СЫВЛĂШ-ÇАР ФЛОЧĔ. **Укерчĕн çинче:** «Стирлинг» йышши питĕ пысăк бомбардировщик Германи хулисене тапăнмашкăн вĕçсе кайма хатĕрленет.

ЕГИПЕТРИ ВĂРÇĂ ĔÇĔСЕМ

ЛОНДОН, июнĕн 30-мĕш. (ТАСС). Официальнăй йĕркепе çапла пĕлтереççĕ: противника хирĕç ĕнер те каярăн çапăçнă, çапăçу питĕ анлă лаптăкра, Мерса-Матрухпа Фука хушшинчи темиçе çĕр тăваткал миля лаптăкăшĕнче пулса пырать. Июнĕн 28-мĕшĕнче империн вăйĕсем Фукаран хĕвеланăçнелли вырăнта противникăн бронетанковăй пысăк чаçĕпе çапăçма тытăннă.

Союзниксен авиацийĕ противникăн çĕр çинчи вăйĕсене çаплах вĕçĕ-хĕррисĕр атакăлать. Июнĕн 29-мĕш ыран тенĕ чух çĕрле тата июнĕн 30-мĕш ыран тенĕ чух çĕрле Мерса-Матрухран хĕвеланăçнерехри район çине темиçе хутчен вăйлăн пыра-пыра тапăннă, çав тапăнусенче Англипе Америка бомбардировщикĕсем пулнă. Пушарсем тухни тата бомбăсем противникăн механизациленĕ хатĕрĕсемпе самолечĕсем çине тÿрĕ пырса ÿкни паллă пулнă. Тобрук гаванĕнче вăйлă пушарсем тухнă, бомба гаваньри пĕр карап çине тÿрĕ пырса ÿкни паллă пулнă.

Июнĕн 1-мĕшпе 29-мĕш хушшинче Хĕвеланăç пушхирĕнче противникăн 96 самолетне пĕтерсе тăкнă, çав самолетсенчен 32-шĕ пикировка тăвакан бомбардировщиксем пулнă.

Александрия çине июнĕн 30-мĕш ыран тенĕ чух çĕрле вĕçсе пырса тапăннă чухне 12 çын вилнĕ, 14 çын аманнă.

Германие ĕçлеме ирĕклĕн каякан французсен хура списокĕсем

НЬЮ-ЙОРК, июнĕн 30-мĕш. (ТАСС). Юнайтед пресс агентстви Виширен пĕлтернĕ тăрăх, Парижра тухакан хаçатсем çапла çыраççĕ: Парижри рабочисен хăшпĕр союзĕсем тата предприятисем гитлерла Германие унти предприятисенче ĕçлеме хăйсен ирĕкĕпе каякан рабочисене пурне те хура списока çырса хураççĕ.

Испанин суту-илÿ парахочĕсем фашистсен подводнăй лодкисене пулăшаççĕ

НЬЮ-ЙОРК, июнĕн 26-мĕш. (ТАСС). Юнайтед пресс агентстви пĕлтернĕ тăрăх, пĕр грузовой суднăн капитанĕ çапла каласа панă: Испанин парохочĕсем Германин подводнăй лодкисене союзниксен суднисене путарма пулăшаççĕ. Испанин парохочĕсем союзниксен суднисем çинчен радио тăрăх сывăхри суднăсене пĕлтереççĕ, вĕсем çинчен тата аяккарахри суднăсене пĕлтерме ыйтаççĕ. Çакна пула вара тĕнĕл держависен подводнăй лодкисем союзниксен карапĕсем ăçта ишнине пĕлеççĕ.

Япони флочĕ Мидуэй утрав сывăхĕнче тунă çухатусем çинчен Америка пĕлтерни

НЬЮ-ЙОРК, июнĕн 30-мĕш. (ТАСС). Америкăри Пĕрлешÿллĕ Штатсен Лăпкă тинĕсри флочĕн командованийĕ çапла пĕлтерет: японецсем Мидуэй утравĕ сывăхĕнчи çапăçура тÿснĕ çухатусем çинчен каласа панисене пурне те тĕплĕн пăхса тухнă хыççăн халĕ çав çухатусем çинчен туллирех даннăйсем пичетлесе кăларма пулать. Япони флочĕн 4 авианосецĕ путнă, вĕсене вĕсем çинчи мĕнпур самолетсемпе пĕрле, 275 самолетпа пĕрле тата çав самолетсен мĕнпур экипажĕпе пĕрле путарнă. Икĕ линкора сиенленĕ (виçĕ линкора та сиенленĕ-и-тен), çав линкорсенчен пĕрне вара хытă сиенленĕ. Икĕ йывăр крейсера путарнă. Виçĕ йывăр крейсера (унтан та ытларах и тен) тата пĕр çăмăл крейсера сиенленĕ. 3 эсминеца (е 4 эсминеца-и) путарнă. Бомбăсемпе торпедăсем 4 транспорта е грузовой суднăна пырса лекнĕ, вĕсенчен пĕри путни лайăх паллă.

Ответлă редактор В. Я. ЯКОВЛЕВ.

ЧУВАШМЕТРОВЕС

заключает договора с организациями на ремонт, технадзор и установку крупных весоизмерительных приборов.

Обращаться по адресу: гор. Чебоксары, улица Ворошилова, 46.

3—2

Чувашский сельхозинститут переехал в новое помещение по ул. К. Маркса, № 34 (бывшее здание Института усовершенствования учителей). Тел. 6-76.

ЧЕБОКСАРСКОМУ ПУНКТУ ЗАГОТЗЕРНО

требуются: технорук, начальник охраны, зав. складами, охранники, грузчики, чернорабочие (мужчины и женщины).

РАЗЫСКИВАЕМ

пропавшую за Волгой с 136 квартала лошадь-матку темно-гнедой масти, 1927 года рождения, грива налево, рост 188 см.

Знающих просим сообщить по адресу: гор. Чебоксары, п. ящ. 12, зам. директора.

2—2

---

12 июня 1942 г. пропали две лошади:

1) жеребец вороной масти, на лбу звезда, между ноздрями белизна;

2) мерин, светло гнедой масти, грива направо, на лбу седина.

Знающих их местонахождение просьба сообщить по адресу: Марпосадский район, Сутчевский сельсовет, колхоз «Красная Армия».

НАРКОМСОБЕС ЧУВАШСКОЙ АССР

объявляет набор слушателей на пятимесячные курсы счетоводов по двойной системе.

На курсы принимаются инвалиды II и III группы, в первую очередь инвалиды отечественной войны и члены семей мобилизованных в РККА, имеющие 7-летнее образование.

Слушатели курсов обеспечиваются стипендией, квартирой и столовой.

Для поступления необходимо представить документы: 1) заявление и автобиографию, 2) справку об образовании, 3) справку ВТЭК о группе инвалидности, а от членов семей об отношении к мобилизованному.

Прием заявлений производится до 15 июля 1942 года.

Документы направлять по адресу: гор. Чебоксары, Красная площадь, дом № 24.

ЦИВИЛЬСКАЯ ФЕЛЬДШЕРСКАЯ ШКОЛА НКЗ ЧУВАШСКОЙ АССР

объявляет прием учащихся на 1942—43 учебный год НА ФЕЛЬДШЕРСКОЕ ОТДЕЛЕНИЕ.

В школу принимаются граждане в возрасте от 15 до 35 лет с образованием не ниже семи лет.

Поступающие принимаются без испытаний.

Прием заявлений с 1 июня по 15 августа.

Зачисление в число учащихся производится с 20 по 25 августа.

Начало занятий с 1 сентября.

Заявления подаются на имя директора фельдшерской школы с приложением следующих документов: свидетельства об образовании, свидетельства о рождении, справки о состоянии здоровья, трех заверенных фотокарточек. Паспорт предъявляется лично.

Стипендия назначается отличникам семилетки и инвалидам отечественной войны.

Принятые в школу обеспечиваются общежитием.

Для ответа к документам должна быть приложена марка в 30 копеек.

Адрес: гор. Цивильск, Б.-Советская, 64, 15 Фельдшерская школа.

3—1 **ДИРЕКЦИЯ.**

НКФ СССР
КАЗАНСКИЙ ФИНАНСОВО-ЭКОНОМИЧЕСКИЙ ИНСТИТУТ ИМЕНИ В. В. КУЙБЫШЕВА

объявляет прием студентов на 1942—1943 учебный год.

Институт готовит высококвалифицированных экономистов-финансистов для работы в финансовой системе и спецбанках. Срок обучения 3 года.

Лица, окончившие среднюю школу в 1941 и 1942 годах, принимаются на 1-й курс без испытаний. В институт зачисляются студенты родственных экономических ВУЗ'ов и факультетов. Студенты обеспечиваются жилплощадью. При институте имеется столовая закрытого типа.

С 1-го июня 1942 г. при институте открываются курсы по подготовке в институт.

Заявления подавать по адресу: г. Казань, улица Бутлерова, д. 4, 3-й этаж, комната 18, Учебная часть.

Финансово-Экономический Институт.

КАЗАНСКИЙ ГОСУДАРСТВЕННЫЙ ВЕТЕРИНАРНЫЙ ИНСТИТУТ им. Н. Э. БАУМАНА

об'являет прием студентов на 1942—1943 учебный год.

Срок обучения в Институте 3½ года.

Правила приема в Институт общие для всех поступающих в ветеринарные ВУЗ'ы Наркомзема СССР в 1942 г.

Поступающие в Институт подвергаются испытаниям по русскому языку и литературе, физике и химии. Без испытаний принимаются отличники и окончившие средние школы в 1942 г.

Прием заявлений до 1 августа, приемные испытания с 1-го по 20 августа 1942 года.

Все иногородние, поступающие в число студентов Института, обеспечиваются жилплощадью.

Заявления о приеме в Институт подаются на имя директора Института с приложением: подробной автобиографии, аттестата об окончании среднего учебного заведения (в подлиннике), трех фотокарточек и справки об отношении к воинской обязанности (для военнообязанных). Паспорт пред'является при личной явке в Институт.

Адрес: гор. Казань, угол ул. Б. Красной и Красина, д. № 9/8.

3—3.

РЕДАКЦИ АДРЕСĔ: г. Чебоксары, ул. Володарского, 5, Дом печати. ТЕЛЕФОНСЕМ: редакторăн — 0—67, редакци секретарĕн—4—26, пропагандăпа парти пурнăç пайĕн — 5—31, ялхуçалăх пайĕн — 3—99, комсомол пурнăç пайĕн — 0—85, издательство конторин — 0—23.

НТ 1281

Гор. Чебоксары, типография № 1 Управления полиграфпромышленности при СНК ЧАССР Заказ № 319. Ф. 6. 58 64 п. ш.